Асран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...

# Хресчен сасси

4 (2642) №
Хакĕ ирĕклĕ

2017 нарăс 2

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

КĔÇНЕРНИКУН

ÇУРАКИ УМĔН

## Паха вăрлăх – тухăçлă çимĕç

**Çĕр ĕçченĕн хĕлле те канма вăхăт çук. Уй-хир пушансанах пулас тухăç пирки шухăшламалла. "Хĕрÿ тапхăр" валли техникăна юсаса йĕркене кĕртмелле, вăрлăха акма хатĕрлемелле. Хуçалăхсенче самантлăха та ĕç шавĕ лăпланмасть темелле. Уй-хире тухиччен паха вăрлăх, çунтармалли-сĕрмелли материалсем, хăватлă техника туянма та тăрăшаççĕ.**

**Районсенче.** Çак кунсенче **Красноармейски районĕнчи** "Волит" пĕрлешĕвĕн техника паркĕ "Томь" комплекспа пуянланнă. Сеялка 5,1 метр сарлакăш акма пултарать. Çулталăк пусламăшĕнче вара "Беларуç" трактор туяннă. Вăл çураки вăхăтĕнче уйхире çĕнĕ сеялка çаклатса тухĕ. Предприяти ертÿçи Валерий Петров каланă тăрăх – чаплă техника çĕр ĕçне çĕнĕлле йĕркелеме пулăшать. Тăкака чакарма лаптăка сухаламасăр, сÿрелесе кăна "шуратса" хăварма пултараççĕ. Тăпра пулăхне ÿстерме сидераципе усă курĕç.

"Томь" акмалли комплекса кредит шучĕпе туяннă. Хăватлă техника хакĕ те йÿнĕ мар, 3250 пин тенке ларнă.

Пĕрлешÿре малашне тырă тасатассине те вăйлатасшăн. Çавăнпа тухăçа сортлакан икĕ машина илнĕ.

"Волитра" çурхи уй-хир ĕçĕсене хатĕр: вăрлăх, техника, ГСМ, удобрени çителĕклĕ. Кăçал вĕсен тĕрлĕ культурăна пĕр пин гектар çинче акса хăвармалла. Ертÿçĕ сăмахĕпе уй-хире 15 тракторпа машина тухмалла.

**Елчĕк районĕнче** техникăна юсанипе пĕрле хĕрсех вăрлăх тасатса типĕтеççĕ. Ака-сухана чăрмавсăр ирттерме вăл 4108 тонна кирлĕ. Хальхи вăхăтра 70 процента яхăн кондицие лартнă. Ленин ячĕллĕ, "Эмметево", "Рассвет", "Комбайн", "Энтепе" предприятисемпе Ю. Цветков, А. Петров, Ю. Галкин фермер хуçалăхĕсенче мĕнпур вăрлăх акма юрăхлă. Ку тăрăхра сортсене çĕнетессипе те лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Çапах супер элита, элита вăрлăх тени яланах таса, паха тенине пĕлтермест иккен.

– Вĕсенче те бактери, кăмпа чирне саракан микробсем тĕл пулаççĕ.


Сăнÿкерчĕкĕ сар.ru сайтран илнĕ
Елчĕк районĕнчи «Комбайн» хуçалăхра.

Лару-тăрăва уçăмлатма фитоэкспертиза ирттерме тивет. Унсăрăн вăрлăха сиенсĕрлетме мĕнле им-çампа усă курмаллине пĕлеймĕн. Хальхи вăхăтра вăл вутпуççи чирĕпе сиенленни палăрать. Çакă тырăпа ĕçлекен хуçалăхсенче им-çампа сахалрах усă курма тытăннипе те çыхăннă. Акмалли материалсен гельминтоспориоз, альтернариоз, пăнтăх чирĕсемпе те сиенленеççĕ. Çавăнпа акас умĕн им-çампа чÿхемеллех, – пĕлтерет Раççей ял хуçалăх центрĕн Елчĕк районĕнчи уйрăмĕн ертÿçи Лидия Ишмуратова. – Эпир çакăн пирки хуçалăхсен ертÿçисене, специалисчĕсене час-часах аса илтеретпĕр. Пахалăха тĕрĕслени хăйсемшĕнех усăллă. Шăтаслăхпа тивĕçтермен вăрлăха акана тухиччен улăштарма май пур".

**Республикăра.** Районсенче çуракине хатĕрленсе нарăс уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсен вăрлăхне 48, 4 пин тонна хывнă. Ку кирлин 100 проценчĕ чухлĕ. Вăрлăхăн 47,1 пин тоннине тĕрĕсленĕ. Çав шутра 30,9 пин тонни (66 проценчĕ) кондицие ларнă. Юлашки вăхăтра ку хисеп 5 процент хăпарнă. Ку енĕпе Элĕк, Тăвай, Пăрачкав районĕсем уйрăмах палăрнă. Пĕрчĕллĕ культурăсен вăрлăхне тасатса типĕтес ĕçе Шупашкар районĕнче уйрăмах аван хатĕрленнине палăртмалла. Пурĕ 87 процент акма юрăхлă. Республикăра ку енĕпе 103 звено ĕçлет. Патăрьел (15 звено), Елчĕк (9) районĕсенче вĕсем уйрăмах нумай. Ку тăрăхра çулсерен пысăк тухăç илни уй-хире паха вăрлăх кăна кăларма тăрăшнипе те çыхăннă.

**Лариса НИКИТИНА.**

КУН ЙĔРКИНЧЕ

## Проектсене пурнăçа кĕртме

**РФ Правительстви йышăннă тăрăх – ял хуçалăхне аталантарма Чăваш Ен валли 478 млн тенкĕ укçа уйăрнă.** Унпа АПК объекчĕсем тума тата тĕпрен юсама, унсăр пуçне инвестици кредичĕсен процент ставкин пĕр пайне тÿлеме каякан тăкака саплаштарма усă кураççĕ.

Тĕслĕхрен, 71 млн тенке федераци бюджечĕ ял хуçалăхне аталантармалли тата чĕртаварпа апатçимĕç рынокне йĕркелемелли патшалăх программипе килĕшÿллĕн техника тата ытти хатĕр туянма, агропромышленноç объекчĕсем тăвассипе, çĕнетессипе çыхăннă тăкаксене финанслама парать.

Палăртмалла, ку енĕпе Раççей Ял хуçалăх министерстви Чăваш Енри виçĕ проекта суйласа илнĕ: "Ольдеевская" агрофирмăра 2,2 га çинче теплица тума тытăнмалла, Красноармейски районĕнчи "Красное Сормово" пĕрлешÿре 400 ĕне вырнаçмалăх сĕт-çу ферми хута каймалла, С. Халитова хресчен(фермер) хуçалăхĕнче 1000 пуç вылăх усрамалăх качака фермин строительстви пуçланмалла.

## АПКна аталантарма

**Иртнĕ эрнере Шупашкарта Раççейри промышленноç енĕпе ĕçлекен Координаци канашĕн ларăвĕ иртнĕ.** Апат-çимĕçе тирпейлекен тытăм валли оборудовани кăларассипе çыхăннă ыйтăва сÿтсе явма РФ промышленноçпа суту-илÿ министрĕ Денис Мантуров, РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич, РФ ял хуçалăх министрĕн заместителĕ Иван Лебедев тата ытти явапллă çынсем хутшăннă.

Çак мероприяти вăхăтĕнче ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов РФ Ял хуçалăх министерствин апатçимĕç тата тирпейлекен промышленноç департаменчĕн директорĕпе Евгений Ахпашевпа тĕл пулнă. Вăл федераци министерствине Шупашкарти сĕт завочĕн ĕçне çĕнĕрен йĕркелесе яма пулăшнăшăн тав тунă. Унсăр пуçне ял хуçалăх продукцине малтанласа тата промышленноçра тирпейлекен организацисемпе уйрăм предпринимательсене федераци субсидине илекенсен шутне кĕртни пĕлтерĕшлĕ пулнине асăннă.

Евгений Ахпашев патшалăх АПКна аталантарма пысăк пулăшу панине кура аграрисенчен те тивĕçлĕ кăтартусем кĕтессе палăртнă.

ФЕРМЕР

## Аслисен çулĕпе

### Ашшĕ – комбайнпа, амăшĕ – тракторпа

"Çĕре юратса, кăмăлтан ĕçлес килет. Ырлăх панăшăн çĕр-аннемĕре пирĕн чунтан тав тумалла", – тет Елчĕк районĕнчи Кармалта çуралса ÿснĕ Надежда Семенова. 13 çул культура тытăмĕнче тăрăшнăскер ял çыннисене вăл пайтах юрласа-ташласа савăнтарнă. Халĕ пиччĕшĕ йĕркеленĕ фермер хуçалăхĕнче трактор çÿретет, вылăх пăхать, ĕне те сăвать. Елчĕке качча тухнăскер тăван Кармал ялĕнчен уйрăлаймасть. Мăшăрĕпе пĕрле район центрĕнчен кунсерен унта ĕçе çÿрет, сывăх тăванне пулăшать.

Малтан та, фермер хуçалăхĕ ашшĕ ячĕпе пулнă чух, уй-хир ĕçĕнчен айккинче юлман. Çамрăксем халĕ те аслă ăрупа юнашар вăй хураççĕ. Арçын-и е хĕрарăм-и – Семеновсем ĕçе уйăрма, тиркеме хăнăхман. Акă Надежда Николаевна хĕрача чухнех ашшĕпе пĕрле трактор çине ларнă, механизатор ăсталăхне вĕренесшĕн çуннă. Сеялкăпа акнă çĕре те хутшăннă. Ачисемшĕн амăшĕ те тĕслĕх пулнă-тăр. Феоктиста Георгиевна ял хуçалăх предприятийĕнче чылай вăхăт трактористра тăрăшнă.

2-мĕш стр. ➔

## «Çĕрулми-2017» курав иртет

Кăçалхи пуш уйăхĕн 2-3-мĕшĕсенче Шупашкарта "Экспо-Контур" суту-илÿпе курав комплексĕнче регионсен хушшинчи "Çĕрулми-2017" курав иртет. Унта яланхиллех çĕршывра "иккĕмĕш çăкăр" туса илессипе çыхăннă çивĕч ыйтусене сÿтсе явĕç, çĕнĕлĕхсемпе паллашĕç. Тĕслĕхрен, Германи селекционерĕсен опычĕпе. Раççейри Çĕрулми союзĕн представителĕсем, тĕпчевçĕсем те хăйсен сăмахне калĕç. Хăнасем хамăр çĕршывri тата чикĕ леш енчи çĕрулми сорчĕсенчен хатĕрленĕ апат-çимĕçе те хаклама пултарĕç.

ÇЫРĂНТАРУ – 2017

2017 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен çак хаксемпе çырăнтараççĕ:

- «Хыпар» – **624 тенкĕ** (индекс П2230)
- «Хыпар-эрнекун» – **286 тенкĕ те 92 пус** (индекс П2267)
- «Хресчен сасси» – **255 тенкĕ те 54 пус** (индекс П2273)

ХУШМА ХУÇАЛĂХ

# Ĕçчен çынна ял савать

**Сăпайлă, ытлашши сăмах ваклама килĕштермен арçын кăмăлне çавăрма, чĕлхине "уçма" çăмăл мар. "Выльăх-чĕрлĕх йышлă усракансем сахал-им?" – турткалашрĕ вăл малтанах. Анчах ял пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ пирки калаçнă май кăмăлĕ уçăлчĕ. Тăван ен, унăн малашлăхĕ Николай Петрова та канăç памасть.**

– "Ударник" хуçалăх ура çинче çирĕп тăнипе Йĕçкасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем малашлăхшăн пăшăрханман. Шалу вăхăтра, йĕркеллĕ тÿленĕ. Шел, ырă ут та такăнать. Юлашки çулсенче лару-тăру палăрмаллах улшăнчĕ. Ялти ĕçсĕрлĕх пирĕн пата та çитрĕ темелле. Чăн та, çĕнĕ ертÿçĕсем тăрăшаççĕ, анчах пысăк парăмлă предприятие туртса кăларма çăмăл пулмĕ. Хуçалăх ывăрлăха кĕрсе ÿксен эпĕ те ыттисем пекех аякка ĕçлеме тухса кайрăм. Анчах ватă аннене пăхма тивнипе таврăнтăм. Вырăнтах ĕçлесе тупăш илмелли майсем шырарăм, – каласа парать Николай Мартынович.


Николай Петров

Хушма хуçалăхри ĕç-хĕле çăмăллатма кивĕрех трактор та туяннă вăл. Хăйĕн лаптăкне сухаласа акнипе пĕрлех ыттисене те пулăшнă.

– Трактор пурри не кура Йĕçкасси ял тăрăхĕ мана хуçасăр çĕре илме сĕнчĕ. 10 гектар нумай мар темелле. Çапах ĕçлеме тытăнсан систерет. Çĕре сухаласа нумай çул ÿсекен курăк акса хăвартăм-ха, унпа вара мĕн тăвас? Сутсан та йÿнĕ. Çĕр халĕ ирĕклĕ, утă туса илме чăрмав çук. Ялта вара выльăх тытакансем чаксах пыраççĕ. Унччен хипе танлаштарсан кĕтĕве икĕ хут сахалрах ĕне тухать. Çамрăксем унпа чăрманасшăн мар. Выльăх усрасан ирĕклĕн çÿреймĕн, киле вĕренпе кăкарса хунăнах туйăнать. Ăна пăхма та çăмăл мар. Çапах нумай шухăшланă хыççăн ĕнесен йышне ÿстертĕм, – васкамасăр, кашни сăмаха шутланăн калаçать арçын.

Йĕçкасси ял тăрăхĕнче фермер хуçалăхĕсем аталанайман. Сăлтавĕ – çĕр пайĕсене 4-5 çул каялла кăна уйăрса пани. Лайăх ĕçлекен предприятирен уйрăлса тухас текенсем те тупăнман. Çĕрĕ те пур темелле, анчах фермер хуçалăхне кÿлĕнекенсем çавçавах сукрах-ха.

– Пирĕн унччен выльăх усрама вăхăчĕ те пулман, хуçалăхра ĕçленĕ. Шалу лайăх илнĕ. Кирлех пулсан ашкакай, сĕт те вырăнтах панă. Тĕрĕссипе, кĕтÿ çÿретме улăх-çаран хĕсĕкчĕ. Хам та ĕмĕрĕпех "Ударник" хуçалăхра механизаторта тăрăшнă. Ака-сухара, вырмара уй-хиртен кĕме пĕлмен темелле. Пурнăçăн хÿри пăрăнăç тенĕн ĕмĕр сакки ватлăхра мана та улшăнма хистерĕ.

Çемье çăмăллăх кредичĕ илсе вите-сарай çĕнетнĕ, ĕне выльăх туяннă. Хальхи вăхăтра витере 11 пуç, çав шутра сăвăнаканнисем – 4. Хушма хуçалăхри йывăр çĕклем кил хуçи çине ытларах тиенет. Мăшăрĕ, Евгения Васильевна, шкулта вĕрентекен пулса ĕçлет. Хĕрĕ Ксения – институтра, ывăлĕ Сергей шкулта пĕлÿ илет. Пушă вăхăтра вĕсем те пулăшма тăрăшаççĕ. Çапах Николай Мартынович ытларах хăйне шанса вăй хурать. Сĕт сумалли аппарат та илнĕ вăл. Кăткăс техникăна ыттисене шанса паманнипе е мăшăрне шелленипе-ши хăех сăвать.

– Сĕт сутни пысăк тупăш кÿрет тесе калаймăн. Çапах хушма хуçалăх высă та, ĕçсĕр те лартмасть. Хальхи вăхăтра "Ударник" хуçалăх 1 литр сĕте 23 тенкĕпе туянать, çулла хак йÿнелет. Сĕтри çу шайне тĕрĕслесен те пĕр пек тÿлеççĕ. Унсăр пуçне сутнă литр чĕртаваршăн 100 гр тырă, 300 гр ытларах улăм парать. Ку пирĕншĕн пулăшу. Ĕне нумай усрасан услам та ытларах кĕрет. Ман ăратлă ĕнесем мар, талăкне 20 литр антараççĕ. Вĕсене утă, çăнăх, кăшман паратпăр, – çемье бизнесĕ пирки пĕлтерчĕ вăл. – Хушма хуçалăхра ĕçлесе илнĕ укçана Мускаврипе танлаштараймăн. Кунта тăкакĕ те нумай: çунтармаллисĕрмелли материалсем, саппас пайсем кирлĕ, техникăна çĕнетмелле. Хушăран парăма та кĕмелле. Тепĕр енчен, тăван килтех ĕçлесе пурăннине, сывăх çынсем юнашар пулнине шута илсен пурнăçа ÿпкелеймĕн.

Йĕçкасси тăрăхĕ çырма-çатрапа, шыв-шурпа пуян. Çавăнпа кунта килĕрен тенĕн кайăк-кĕшĕк ĕрчетеççĕ. Петровсен картишĕ те çулла чăхчĕппе, хурпа, кăркка-кăвакалпа тулать. Вĕсен йышĕ çĕре те сывхарать пулĕ. Анчах сутлăх мар, хăйсем, тăванĕсем валли усраççĕ.

**– Ĕнесене йышлатса, тен, фермер хуçалăхĕ йĕркелемелле?**

– Кĕтĕве ÿстерме йывăр. Ял халăхĕ тына пăрусене 50 пин тенкĕрен кая мар сутать. Ăратлисем тата хаклăрах. Йывăр лава кÿлĕнме çамрăк мар ĕнтĕ, пилĕк теçеткерен иртрĕм. Çамрăк пулсан хăрамасăрах тытăнмалла. Фермерсене патшалăх та пулăшать. Манăн вара мĕн пуррипех майлаштарсасаплаштарса пымалла.

**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**
**Муркаш районĕ.**

ФЕРМЕР

# Аслисен çулĕпе

1-мĕш стр.

Мăшăрĕ Николай Георгиевич комбайнпа çÿренĕ, хĕрарăм вара хăватлă техника рульне алăран ямасăр акнă, суха тунă. "МТЗпа" кăна мар, "ДТ" йышшипе те ĕçленĕ.

Хушнине тĕплĕ, типтерлĕ пурнăçласси те ачисене ашшĕ-амăшĕнченех куçнă. Николай Георгиевич çураки, вырма тапхăрĕсенче яланах малти вырăнсем йышăннă. Коллективлă ял хуçалăх предприятийĕнче 40 çул тар юхтарнăскер "Ĕç ветеранĕ" ята илейменшĕн кăна пăшăрханать. "Ăна парас тесе пухура йышăну та тунă, анчах, темшĕн, документсем Шупашкара çитеймен", – чун ыратăвне пытармарĕ аслă Семенов.

Тивĕçлĕ канăва тухсан вăл фермер пулма тĕв тунă. Ĕçе юратакан çын килте алă усса ларать-и вара? Ачисен малашлăхĕ те шухăшлаттарнă, вĕсене çĕртен уйăрас килмен унăн. Николай Георгиевичпа Феоктиста Георгиевнăн тăватă ачи те аслă пĕлÿ илнĕ. Ял хуçалăх академийĕ пĕтĕрнĕ хыççăн ялалла çавăрман пулсан Василий, тен, хуларах юлĕччĕ. "Хам илсе килтĕм", – тĕрĕс утăм тунине палăртса каларĕ ашшĕ. Паянхи кун кĕçĕннисем кăна хулара тĕпленнĕ. Тепĕр ывăлĕ, полицире тăрăшаканскер, тивĕçлĕ канăва тухсан ялах таврăнасшăн-мĕн. Апла-и е капла-и, анчах ĕççи вăхăтĕнче, канмалли кунсенче вĕсем аслисене пулăшма çÿреççĕ. Мĕншĕн тесен Семеновсем хуçалăха малтанласа хăйсен вăйĕпех аталантараççĕ. Хальлĕхе ют çынна явăçтарма май килменнин сăлтавĕ те пур – выльăх апачĕ хатĕрлеме çĕр çителĕксĕртерех иккен.

### Çĕр çителĕклĕ пулсан-и?..

Василий Семеновăн фермер хуçалăхĕ 2014 çулта йĕркеленнĕ. Ку вăхăта унăн никĕсĕ вăйсăр пулман. Часах конкурсра çĕнтерсе патшалăх грантне тивĕçнĕ. Унпа малтанах техника паркне пуянлатнă – çĕнĕ "Беларуç" трактор туяннă. Сăвакан ĕне йышне ÿстерме, вăкăр самăртма, сурăх ĕрчетме апат çителĕклĕ хатĕрлемелле вĕт.


Василий, Надежда, Николай Семеновсем.

Тырри-пуллине Семеновсем туса илеççĕ-ха, анчах нумай çул ÿсекен курăк валли, выльăх çÿретме çĕр хĕсĕкрех. Çавăнпа хĕлле валли сенаж хываймаççĕ. Ун вырăнне жом туянаççĕ, ăна çăнăхпа хутăштарса апатлаççĕ.

"Кун пек чух темиçе тĕрлĕ выльăх усрани хуçалăхшăн пушшех тăкаклă мар-и?" – ыйтатăп çемьерен. "Вĕсен йышне чакарас килмест. Сурăхсене пĕтерме те шел. Ĕне йăхĕ те хамăрнах – анне енчен, Курнавăшран, ютран туянман. Хамăр пăрулаттарса йыша пысăклатнă. Вăкăр тăхăмне кăна кăштах çĕнетнĕ. Хальхи вăхăтра пурте кирлĕ пек, сĕт сахал чух вăкăр самăртни тупăш парать, çавăнпа ăна та, кăна та упрас тетпĕр. Выльăх шутне ÿстерме пултаратпăр, анчах витене анлăлатмалла. Унсăр пуçне ăна тăрантма та апат ытларах кирлĕ. Каллех çĕр сахалли ура хурать", – ăнлантарать Надежда Семенова.

Апла пулин те çемьепе ĕçлекен фермер хуçалăхĕ çулсеренех строительствăна тимлĕх уйăрать. Пĕлтĕр тырпул упрамалли ангар тунă. Халĕ унти урайне бетон сармаллине асăнчĕ Николай Георгиевич. Василий Николаевич ытти техника туянасшăн. Тĕрлĕ ĕç тума пултарнăран Семеновсем çын кусĕнчен пăхмаççĕ. Ангар хăпартнă чух тимĕре те хăйсемех шăратса çыпăçтарнă.

Унсăр пуçне укçа енчен те банкран парăма кĕмен. Хăйсен хуçалăхĕнчен илекен тупăшпа аталанаççĕ. Пирвайхи çул аренда çĕрне Аслă Таяпа сывăхĕнчи уйра уйăрса панăран фермера Юрий Амаюков пулăшнă. Транспортпа инçете хутласран хуралтăпа, ытти япалапа тивĕçтернĕ. Çавăнтанпа çыхăнăва татмаççĕ.

**Ирина НИКИТИНА.**

ЫРĂ СĔНŬ

# Кĕленче савăтран – парник

Çемье канашĕнче эпир 750х450х195 см калăпăшлă парник тума шут тытрăмăр. Авăн уйăхĕнче, çанталăк ăшă тăнă вăхăтра, никĕс йĕркеленисĕр пуçне 0,5 л пушă бутылкăсенчен стена купаласа хăпартма та ĕлкĕртĕмĕр. Фундаментне М-100 монолитлă бетонран /М-400 цемент/ çак виçепе турăмăр: цемент – 2 пай, хăйăр – 2, хăйăрпа вĕтĕ чул хутăшĕ /грави/ – 6, шыв – 8 л.

Тепĕр 3 кунран М-400 цементпа усă курса кирпĕч юпасем купаласа хăпартрăмăр. Ун валли раствора çак виçепе турăмăр: цемент – 2 пай, хăйăр – 9, шыв – 8 литр. Шыв виçи хăйăрпа вĕтĕ чулри нŭрĕк тытăмне кура улшăнма пултарать.

Кĕленче бутылкăсене усă курас умĕн çуса тасатрăмăр, типĕтрĕмĕр. Стена купалама раствора шыв сахаллăрах хушмалла. Вăл хăйма евĕр пулмалла.

Кĕленчесене купаласа хăпартнă вăхăтра кашни 4 ретрен икшер пăралук /4 мм/ хурса тухрăм, çавăнпа стенасем çирĕпрех пулчĕç. Ĕçленĕ вăхăтра кашни 2-3 сехетрен тул енчи бутылкăсене пир татăкĕпе çуса тасатрăмăр.

Хĕле кĕрес умĕн стенасене шал енчен полиэтилен пленкăпа витме тиврĕ. Мĕншĕн тесен кĕленчесем ăшă-сивĕ çанталăкра çурăлма пултараççĕ.

Парнике 3326 бутылка кĕчĕ. Мĕншĕн-ха ăна унран хатĕрлеме шут тытрăм? Кĕленчерен тунă стена кăнтăрла лайăх ăшăнса çитет. Каçхине вара савăтри ăшă сывлăш майĕпен парнике тухса тăрать. Çавна май вăл унта чылай вăхăт тытăнса тăрать. Кăнтăрлахипе каçхи температура улшăнăвĕ те питех сисĕнмест.

Унсăр пуçне кирпĕч те перекетленет. Калăпăшĕпе икĕ бутылка пĕр кирпĕч евĕр пулсан /250х125х65 мм/ эпир ăна 1663 штук перекетлерĕмĕр. Хальхи хакпа шутласан – 13304 тенкĕ.

Парникре туса илнĕ пахчаçимĕç тухăçĕ питĕ савăнтарать. Сăмахран, юпа уйăхĕ вĕçĕччченех эпир тутлă, илемлĕ помидор пуçтаратпăр. Çитменнине чир те хăратмасть вĕсене. Пăрăçпа хăяр та лайăх çитĕнеççĕ.

Кашни кĕркуннех парнике тислĕк тăкатпăр /1 тăваткал метра 15-20 кг/. Хĕллехи вăхăтра унта юр тултаратпăр /25-30 см/.

**Альберт КОЛЬЦОВ.**
**Сĕнтĕрвăрри районĕ,**
**Малти Пукаш ялĕ.**

ШУХĂШ

# Çамрăка яла хăварасчĕ

Çамрăксене ял хуçалăх отраслĕпе ытларах кăсăклантарма районсенче аграри класĕсем уçмалли пирки Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырура та каларĕ. Паянхи куна çакнашкал классем республикăра Шупашкар, Çĕрпŭ, Красноармейски, Патăрьел районĕсенче йĕркеленнĕ. Акă нумаях пулмасть Шупашкар районĕнчи Кăшавăш тата Янăш шкулĕнчи профильлĕ классенче вĕренекенсем Чăваш патшалăх ял хуçалăх академине экскурсие килнĕ. Вĕсене унта ятарлă тумтирпе тивĕçтернĕ. Малашне çамрăксене çири симĕс жилетсене пула тŭрех палласа илĕн.

Экскурси вăхăтĕнче вĕренекенсем ку чухнехи ял хуçалăх техникипе паллашнă, "Шупашкарти автокомпонентсен завочĕ" пĕрлешĕве те çитсе курнă. Практика занятийĕсем килĕшнине пĕлтернĕ вĕсем.

Тимĕре хĕрнĕ чух туптамаллине, ачана çамрăкран вĕрентмеллине калаççĕ халăхра. Тăван çĕре юратассине те пĕчĕкрен ăша хывмалла-тăр. Унсăрăн ялта специалистсемсĕр юлма пулать. Сăмахран, выльăх тухтăрĕ пур çĕрте те çитмест. Механизаторсем те ытларахăшĕ пенси çулне сывхараççĕ. Нумаях пулмасть Муркаш районĕнчи Йŭçкасси тăрăхĕнче пултăмăр. Вăрманкас ялĕнче пурăнакан Петр Грачев 80 çулччен водительте тăрăшнă. "Тимĕр урхамах" рульне вăл пĕлтĕр çеç алăран янă.

Самана улшăннă май техника та çĕнелет-çке. Ăна алла илме вара çамрăка çăмăлрах. Çавăнпа та ял хуçалăх класĕсем уçни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Тен, çак мелпе усă курса каччăсемпе хĕрсене яла хăварма май пулĕ. Паллах, çамрăк специалистсене тивĕçлĕ шалу та тŭлемелле. Çемье çавăрма çурт-йĕр те кирлĕ.

Ача-пăчана ĕçпе çитĕнтерни вара япăх мар. Акă Пушкăртстан ял хуçалăх наукисен докторĕ, Пушкăртстан Патшалăх Пухăвĕн-Курултайăн депутачĕ Амир Ишемгулов Авăркас районĕнчи тăватă шкула 5-шер хурт çемйипе тивĕçтернĕ.

Пишкайăн ялĕнчи шкулта биологипе хими предметне 13 çул ертсе пыракан Марина Петрова хурт-хăмăр аталантарас ĕçе хăй çине илнĕ. Мĕншĕн тесен ку енĕпе унăн паха опыт пур иккен: кил хуçалăхра мăшăрĕпе пĕрле вĕлле хурчĕ ĕрчетеççĕ.

6-9-мĕш классенче вĕренекенсем кружок занятийĕсенче теори вĕреннĕ пулсан çуллахи вăхăтра практикăна çŭренĕ. Çапла çĕнĕ вĕренŭ çулĕ тĕлне вĕрентекен ачасемпе пĕрле тутлă та техĕмлĕ, усăллă пыл самаях хатĕрленĕ.

Ачасем тăрăшни сая кайман. Ĕлхŭ хулинче иртнĕ "Çамрăк натуралист – 2016" ял хуçалăх продукцийĕн куравĕнче Пишкайăн шкулĕн вĕренекенĕсем 2-мĕш вырăн йышăннă. Çакă вĕсене Пĕтĕм Раççейри "Ылтăн кĕркунне" курава хутшăнма çул уçнă. Унти пĕтĕмлетŭсем тăрăх – çамрăк хурт-хăмăрçăсем "Вĕренекенсем хушшинче професси суйласа илес енĕпе ĕçлекен тытăма аталантарни тата ял хуçалăх сферине çĕнĕ кадрсене явăçтарни" номинацире бронза медале тивĕçнĕ.

Çапла, чĕлхе çеç мар, ĕçченлĕх те Мускава çитерет.

**Валентина ПЕТРОВА.**

ÇĔНĔЛĔХ

# «Тŭрĕ тŭлев» проект

«Тŭрĕ тŭлев» пилотлă проект 2011 çулта икĕ регионта хута кайнă (Чулхула облаçĕпе Карачай-Черкес Республикинче). Унтанпа Раççейри 20 регион «Тŭрĕ тŭлев» çине куçнă. Вĕсен йышĕ çулсерен хушăнса пырать. 2019 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен Чăваш Енре те сăнавлă проект хута кĕмелле.

Çĕнĕлĕх мĕн енĕпе лайăх? Раççей Федерацийĕн Социаллă страховани фончĕн республикăри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх – вăхăтлăх ĕçлейми пулнипе, малашлăхпа çыхăннă обязательнăй социаллă пособисене страхланă граждансене шутласа парассине, тŭлессине малашне автоматизациленĕççĕ.

Унăн тĕллевĕ:

- граждансене социаллă хŭтлĕх парассине ŭстересси;
- страхлакансен пособипе çыхăннă ĕçне-хĕлне лайăхлатасси, тăкака чакарасси;
- пособи тŭлевне палăртассине, тŭлессине уçăмлатасси;
- пособи палăртнă, шутласа панă чухне саккуна пăсасран асăрхаттарасси.

«Тŭрĕ тŭлев» проект организацин çаврăнăшри укçине перекетлеме пулăшать. Ĕçлекен çын уйăхăмĕнчи финанспа çыхăннă социаллă обязательствăсем туллин пурнăçланас шанăç ŭсет. Ку ĕçсене малашне социаллă страховани фончĕ хăй пурнăçлĕ.

Çĕнĕлĕх страхланă çыншăн та усăллă. Вăл ĕçлеме пултарайманнине çирĕплетекен хут кăтартнă хыççăн 10 кунра тŭлев илет. Çакă предприятин финанс лару-тăрăвĕпе çыхăнман. Пособие тĕрĕс шутласа парĕç.

Фондăн Чăваш Енри уйрăмĕ проектпа çыхăннă мероприятисен планне – «Çул картти» – хатĕрленĕ ĕнтĕ. Унпа килĕшŭллĕн çĕнĕлĕх пирки халăхра, страхлакансем хушшинче ăнлантару ĕçне тума тытăнмалла. Çав шутра отчета электронлă майпа йĕркелесси, вĕренŭ семинарĕсем ирттересси тата ытти те.

**Лариса НИКИТИНА.**

КУН-ÇУЛ КАÇАЛĂКĔ

# Иртнĕ куна тавăрма çук

Эпĕ архив ĕçĕсене тишкерме кăмăллатăп. Акă нумаях пулмасть унта Элĕк районĕнчи парти ĕçченĕ çырса пынă йĕркесемпе паллашма тŭр килчĕ. Вырăсла çырнине чăвашла куçарса пичетлетпĕр.

**Панкли ял тăрăхĕ.** Тури Панклири Леонид Григорьев кулак лашине сутса янă, 8 сурăхне пуснă, суту-илŭпе ĕçленĕскер колхозниксене агитацилесе пăтратать. Çавăн пекех Кудрявцев эрех ĕçет, сĕт-çу ферминче выльăх выçăпа вилет.

**Актайри колхоз.** Колхоз членĕнчен 4 хур, 4 пăт ыраш туяннă. Авăн яшки йĕркеленĕ, хурсене пусса çинĕ.

**Мăн Пакăшри колхоз.** 1000 пăт çĕрулмине шăнтса янă, ниçта та вырнаçтараймаççĕ.

**Çĕнĕ Матьăкри колхоз** председателĕ, Григорьев, 150 пăт çăкăр упрать, патшалăха памасть. Унăн ашшĕне Совет влаçне хирĕç калаçнăшăн 1917 çулта персе вĕлернĕ. Çак кунсенче Григорьев 3 сысна пусрĕ, путсĕр, тырпула уй-хиртен пухса кĕртмен, çĕрулмине çуррине çеç кăларнă, лаши вакка чăмнă, колхозниксем кăмăлсăр.

**Хурăнкассинчи колхозра** ĕçкĕ-çикĕ ирттернĕ, вĕсен йышĕнче Николай Мартынов та пулнă.

**Ехремкасси ял тăрăхĕ.** Кăрлачăн 2-мĕшĕнче ял тăрăхĕн канцелярийĕнче ĕçкĕ-çикĕ йĕркеленĕ. Унта Емельян Волков, колхоз председателĕ Касьян, ял тăрăхĕн секретарĕ Козлов, ял тăрăхĕн счетоводĕ Мешков хутшăннă. Çырткаламалли вырăнне 1 катка тăварланă хăяр, 1 ещĕк панулми, 15 кĕрепенккe çу, 2 пăт кĕрпе тата ыт. те илсе пынă. Ял тăрăхĕн ертŭçин Волковăн пиччĕшĕ вăрă-хурах.

**Тавăт ял тăрăхĕн ертŭçи** Степанов яланах ŭсĕр çŭрет.

**Матьăкри ял тăрăхĕ.** Кивĕ Матьăкра Николай Павлов кулак пур. Вăл маларах икĕ çил арманĕ тытнă. Хальхи вăхăтра ял тăрăхĕн секретарĕнче вăй хурать.

**Кайри Хирлепри** Акулина Яковлева ача çуратнă, ăна сарайĕнчи тислĕк айне пытарнă. Çак ĕçе судра пăхса тухаççĕ.

**Сурăмхĕрри колхоз** председателĕн Яков Игнатьевăн пурлăхĕ /1000 тенкĕлĕх/ пушарта çунса кĕлленнĕ, вутçулăма колхозник чĕртнĕ.

**Матьăкри ял тăрăхĕн** кивĕ составĕнчи Пахомов укçа-тенке усăсăр тăкакланă, кулак пурлăхне ĕçкĕ-çикĕпе ашкăнса пĕтернĕ: лашана 30 тенкĕпе, ĕнене 40 тенкĕпе, сехет, самовар, çăм атă сутнă.

**Урмай ача сачĕ** 15 м çитсă, ачапăча япалисем сутнă. Вĕсене правлени членĕсен хушшинчех пайланă.

**Тури Юнтапари колхозра** Никонор Павлов кулак пур. Хăй вара счетоводра ĕçлет.

**Шупашкарти истори архивĕн материалĕсемпе усă курса Александр МАКАРОВ хатĕрленĕ.**

КИВĔ СĂНŬКЕРЧĔК



Хăçан кĕпе-йĕм çумалли машина туянса парĕç-ши?

**Александр МОКИН сăнŭкерчĕкĕ.**

ХӲТЛӖХ

# Пенси саккунӗнчи ҫӗнӗлӗхсем

♦ **Кӑҫалхи кӑрлач уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ӗҫлемен пенсионерсен хушма тӳлев виҫи ӳснӗ.** Ӑна Чӑваш Енре 2017 ҫул валли ҫирӗплетнӗ пурӑнма кирлӗ чи пӗчӗк виҫе – 7720 тенкӗ – шайне ҫитерме. Федераци социаллӑ хушма тӳлевпе ӗҫлемен пенсионерӑн тупӑшӗ регионра пурӑнма кирлӗ чи пӗчӗк виҫерен сахал пулсан тивӗҫтерет.

♦ **Раҫҫейре 2015 ҫултанпа усӑ куракан пенси формулипе килӗшӳллӗн 2017 ҫулта страхлав пенсийӗ илсе тӑмашкӑн 8 ҫултан сахал мар стаж тата 11,4 пенси балӗ кирлӗ.** Ҫакна 2025 ҫулччен пурнӑҫланакан куҫӑм тапхӑрӗпе ҫирӗплетнӗ: кирлӗ чухлӗ стаж ҫулсерен – пӗрер ҫул, пенси балӗн шучӗ 2,4 ӳсет.

Енчен те тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ чух стажпа балл ҫителӗксӗр пулсан страхлав пенсине каярах ҫирӗплетӗҫ е социаллӑ пенсипе тивӗҫтерӗҫ (хӗрарӑмсене – 60, арҫынсене – 65 ҫултан). Унсӑр пуҫне страхлав пенсине преми коэффициенчӗсемпе усӑ курса ӳстерме те май пур.

♦ **2017 ҫултан пуҫласа патшалӑх (муниципалитет) служащийӗсен пенси ҫулне ӳстерсе пыраҫҫӗ.** Арҫынсем 2026 ҫултан тытӑнса 65 ҫулта тивӗҫлӗ канӑва тухаҫҫӗ, хӗрарӑмсем 2032 ҫултан пуҫласа – 63 ҫулта. Пенси ҫулне ҫулсерен 6-шар уйӑх ӳстереҫҫӗ.

Пенси ҫулӗ ҫын патшалӑх (муниципалитет) службинче ӗҫленӗ тапхӑрта кӑна ӳсет. Енчен те вӑл ватлӑха кура ӗҫлеме пӑрахсан страхлав пенсине шутласа пама ыйтсан пенсине ҫав вӑхӑтран ҫирӗплетеҫҫӗ (анчах саккунпа ҫирӗплетнӗ пенси ҫулӗнчен маларах мар).

♦ **Кӑҫалхи нарӑс уйӑхӗнчен пуҫласа ӗҫлемен пенсионерсен страхлав пенсийӗ (ватлӑх ҫулӗпе, инвалидлӑхпа, пӑхса усракана ҫухатнӑран ҫирӗплетсен) Раҫҫей статистики 2016 ҫулхи хаксен ӳсӗмне шутласа палӑртнӑ тӑрӑх 5,4% ӳсет.**

Индексаци кӑтартӑвӗпе страхлав пенсийӗ шутӗнчи ҫирӗплетнӗ тӳлев уйӑхра 4805,11 тенкӗпе танлашӗ, пенси балӗн хакӗ – 78,28 (2016 ҫулта – 74,27) тенкӗ.

Ҫурла уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ӗҫлекен пенсионерсен страхлав пенсийӗсене (2016 ҫулхи взноссем тӑрӑх) ҫӗнӗрен шутласа параҫҫӗ.

♦ **Нарӑс уйӑхӗнчен тытӑнса федераци ҫӑмӑллӑхҫисен уйӑхсеренхи укҫа тӳлевӗ тата соцпакет хакӗ 5,4% ӳсет.**

Соцпакет хакӗ уйӑхне 1048,97 тенкӗ пулӗ, ҫав шутра сипленмелли эмелшӗн – 807,94, санаторишӗн – 124,99, транспортшӑн – 116,04 тенкӗ.

♦ **Ака уйӑхӗнчен пуҫласа патшалӑх тивӗҫтерӗвӗн социаллӑ пенсийӗсем (социаллӑ, вӑрҫӑ участникӗсен тата инвалидӗсен, пуҫ хунӑ ҫар ҫыннисен ашшӗ-амӑшӗн) те ӳсӗҫ.** Ӑна ӗҫлекенсене те, ӗҫлеменнисене те тӳлеҫҫӗ.

ПАХЧАҪӐ

# Вӑрлӑх акма хатӗрлетпӗр



ЧИ МЕЛЛӖ ВӐХӐТ

Ӳсентӑран вӑй илесси уйӑх тӑхринчен нумай килет. Вӑл йывӑҫ-курӑк сӗткенӗ вулли тӑрӑх куҫассине витӗм кӳрет. Уйӑхӑн пӗрремӗш тата иккӗмӗш тӑхринче ӳсентӑран ҫитӗнет, сарӑлать. Виҫҫӗмӗшпе иккӗмӗшӗнче ҫулҫипе хунавӗ ӳсесси чарӑнать, тымарӗ ҫирӗпленет. Уйӑхӑн тӑваттӑмӗш тӑхринче ӳсентӑран тепӗр хут ҫитӗнме пуҫлас умӗн канса вӑй илет.

Калчалӑх вӑрлӑх нарӑс уйӑхӗн вӗҫӗнче – пуш уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче акма тытӑнаҫҫӗ.

**Нарӑс уйӑхӗнче пӑрӑҫ, томат, баклажан акмалли чи лайӑх кунсем (уйӑх тӑхрине шута илсе): 1-2, 7-3, 27-28.**

**ПӖЛМЕ**

Вӑрлӑха малараx аксан калча вӑрӑмланса каять. Ку хушма ӗҫ, тӑкак. Ҫавӑнпа пакет ҫинче ҫырнине пӑхмалла:

❖ вӑтамран миҫе кунран шӑтса тухать (тӗрлӗ культурӑн 3-15 кунпа танлашать);

❖ акнӑ хыҫҫӑн малтанхи тухӑҫ иличчен миҫе кун иртет;

❖ калчана йӑран ҫине хӑш вӑхӑтра куҫарса лартмалла.

ПАХАЛӐХ

Вӑрлӑх лайӑх шӑтса тухтӑр тесен тӗрӗслемелле. 6-10 г тӑвара 1 стакан шывра (туллиех кирлӗ мар) ирӗлтермелле. Пӗчӗкрех савӑта вӑрлӑх ямалла, тӑварлӑ шыв хушса пӑтратмалла. Унтан 5-10 минут кӗтмелле. Ҫиеле ишсе тухнӑ вӑрлӑха пуҫтарса илмелле – акма юрӑхсӑр. Тӗпне ларнипе усӑ курмалла. Ӑна малараx 20-25 градус ӑшӑра типӗтмелле.

ИМ-ҪАМЛАТПӐР

Калча ҫирӗп, сывӑ пултӑр тесен акас умӗн вӑрлӑха лайӑх шӑтса тухма, вӑй илме, чир-чӗре, сӑтӑрҫӑсене пӗтерме ятарлӑ хутӑшпа усӑ курмалла: томат вӑрлӑхне марганец тӑварӗн хутӑшӗнче (1 процентлӑ) тытмалла. Ҫакӑ акмалли материала дезинфекцилет, ҫимӗҫне малараx пиҫсе ҫитме пулӑшать.

Вӑрлӑха хӑвӑртрах шӑтса тухма шывра ислетес умӗн "идеал", "гуми", "бутон", "заслон" "барьер" е ӳсме пулӑшакан "эпин-экстра" препаратсемпе им-ҫамламалла.

ХАЛӐХ МЕЛӖ

✓ Томат, пӑрӑҫ вӑрлӑхӗсене халӑх мелӗпе те им-ҫамлама пулать. Сӑмахран, алоэ сӗткенӗпе. Вӑрлӑха пир татӑкӗпе чӗркемелле, 1,5 сехетлӗх шӗвекре тытмалла. Унтан лайӑх типӗтмелле. Алоэ сӗткенӗ вӑрлӑх шӑтаслӑхне 25 процент ӳстерет.

✓ Пыл янӑ шыв та вӑрлӑха шӑтма пулӑшать. 1 стакан шывра 1 чей кашӑкӗ пыл ирӗлтермелле. Пир хутаҫа вӑрлӑх тултарса 1,5 сехет тытмалла, типӗтмелле.

✓ Натри, кали, аммони тӑварӗсем, торф, йывӑҫ кӗлӗ, тислӗк шӗвекӗсем те вӑрлӑхшӑн усӑллӑ. Вӗсем тавралӑхшӑн та сиенлӗ мар. Чылай ӳсентӑрана хӑвӑртрах тымар ярса шӑтса тухма, ҫитӗнме пулӑшаҫҫӗ.

ХУРА ТУНА

Калчан анлӑ сарӑлнӑ чирӗ – хура туна. Унран сыхланма хӑвӑр тӗллӗн хатӗрленӗ тӑпрана дезинфекцилемелле. Вӑрлӑха ҫӑра акмалла мар. Ытлашши шӑварни, калчана япӑх уҫӑлтарни, сывлӑшри температура палӑрмаллах улшӑнни, тӑпра вӗҫӗмех йӗпе тӑни чир-чӗре сарӑлма пулӑшать. Мӗнле сыхланмалла?

● Вӑрлӑха ҫӑра аксан тӑпрана "триходермин" препарат (инструкци тӑрӑх) хывмалла.

● Акас умӗн "фитоспорин-М" препаратпа им-ҫамламалла. 100 мл шывра 50 г препарата ирӗлтермелле. 1/2 стакан шыва пипеткӑпа 1-2 тумлам хутӑштармалла. Вӑрлӑха шӗвекре 2 сехет тытмалла.

● Вӑрлӑха "эпин-экстра", "иммуноцитофит", "агат-25К" препаратсемпе им-ҫамламалла.

● Калчана куҫарса сайралатнӑ хыҫҫӑн тӑпра ҫине юханшыв хӑйӑрӗ сапмалла.

● Вӑл ытлашши йӗпенесрен, шӑварнӑ хыҫҫӑн температура чакса каясран асӑрханмалла.

● Чир палӑрма тытӑнсан сиенленнӗ ӳсентӑрана тымарӗпе кӑлармалла. Сыввисене 1 процентлӑ бор шӗвекӗпе шӑвармалла.

Куҫарса сайралатиччен калчана удобренипе апатлантарма юрамасть.

СЫВЛӐХ

# Чирлеме пуҫласанах

Шӑнса пӑсӑлсан С витамин нумай упранакан сӗткен ӗҫме тӑрӑшмалла. Тӗслӗхрен, хура хурлӑхан морсӗ, шӑлан ҫырлин, лимон чейӗ тата ытти те. Вӗсем ытла ҫӑра тата йӳҫӗ пулмалла мар, шывпа хутӑштармалла.

Сӑмсана кунне 4-6 хут кирек мӗнле тӑвар шывӗпе чӳхемелле. Ҫакӑ микроорганизмсене аталанма памасть. Тинӗс тӑварӗ йод пуртан лайӑх антисептик шутланать. Пыра та тӑвар е эмел курӑкӗсен шывӗпе кунсерен темиҫе хут чӳхени усӑллӑ.

● 1,5-2 чей кашӑкӗ тинӗс тӑварӗ илмелле, 1 стакан вӗренӗ ӑшӑ шыва ямалла, ун хыҫҫӑн сӑрӑхтармалла та усӑ курмалла.

● Салтак тӳмине, ҫурла курӑкне (календула), шур курӑкне (шалфей), эвкалипта пӗрле е уйрӑмшар 1 апат кашӑкӗ хатӗрлемелле, тин вӗретнӗ 1 стакан шыва ямалла, хулӑн питшӑллипе хупласа 1 сехет тытмалла (термосра тӑрӑлтарсан та юрать), ун хыҫҫӑн сӑрӑхтармалла. Кунне 4-6 хут ӑшӑлла ӗҫмелле.

# Ӳпкене сиплет

Ӳпке чирӗнчен тата туберкулезран прополиспа усӑ кураҫҫӗ. Аптекӑри 10 процентлӑ прополис шӗвекне 20 тумлам туса 10 мл вӗри сӗте ямалла. Ҫывӑрма выртас умӗн 10 кун ӗҫмелле (пӗр уйӑхра). Ҫапла 6 уйӑх сипленмелле. Прополис шӗвекне килте те хатӗрлеме пулать: ӑна вӗтетсе 5 г илмелле те 75 процентлӑ 50 мл спирта (е 96 процентлине 45 мл) ямалла. Тӗттӗм вырӑнта 10 кун тытмалла, вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн кӗленчене силлемелле. Ун хыҫҫӑн сӑрӑхтармалла, холодильникра упрамалла.

# Пилӗк ыратсан

Пилӗк, ҫурӑм шӑмми ыратсан, остеохондроз канӑҫ памасан хӑшӗ-пӗри ҫапла сипленме сӗнет.

1,5 литр пластик бутылкӑна ӑшӑ шыв тултармалла. Ҫурӑмпа выртса ун ҫинче ярӑнмалла. Упражнение 15 минут пурнӑҫласан ыратни иртет. Ӑна тӑтӑшах тума манмалла мар.

# Ҫӳҫ тӗсне таварма



Ҫӳҫ шуралма тытӑнсан мана ҫак мел пулӑшать. Хутаҫлӑ, хӗрлӗ хаяр пӑрӑҫа 6 штук хатӗрлетӗп, 0,5 л шур эрехе яратӑп, 21 кун тӗттӗм вырӑнта тытатӑп. Ун хыҫҫӑн пӗрер апат кашӑкӗ илетӗп те эрнере икӗ хут пуҫа сӑтӑратӑп. Ӑна ҫӑвас умӗн пӗр кун малараx та ҫапла тӑватӑп. Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫӳҫӗн пирвайхи тӗсӗ таврӑнать.

**Марина ИЛЬМЕТОВА. Патӑрьел районӗ.**



# Розмарин ватӑлтармасть

Ватӑлнӑҫемӗн капиллярсем пӗрӗнеҫҫӗ, питӗрӗнеҫҫӗ. Ҫакна пула органсем ҫителӗклӗ апат илеймеҫҫӗ, ҫын чирлеме пуҫлать, унӑн ӗмӗрӗ кӗскелет. Итали тӗпчевҫисем тишкернӗ тӑрӑх – апатра тӑтӑш розмаринпа усӑ курни юн тымарӗсене ҫирӗплетет. Юн лайӑхрах чупма тытӑннӑран ҫын часах ватӑлмасть.

# Сӗт хӳтӗлет

Канадӑри медицина ӗҫченӗсем кунсерен сӗт, кефир, сыр, тӑпӑрчӑ ҫиме сӗнеҫҫӗ. Тӗпчев кӑтартӑвӗсем тӑрӑх – ҫак ҫимӗҫсем шыҫӑ чирӗ аталанасран хӳтӗлеҫҫӗ.

# Ӑрӑва тӑсаймӑн

Енчен те арҫын телефона шӑлавар кӗсйинче вӑрах йӑтса ҫӳресен ҫыхӑну хатӗрӗнчен тухакан радиаци сперматозоид шутне чакарать. Унсӑр пуҫне вӗсем вӑйсӑрланнине те палӑртаҫҫӗ Англи ӑсчахӗсем.

*Асӑрхаттарни: халӑх сӗнекен сывату меслечӗсемпе усӑ куриччен тухтӑрпа канашласа пӑхмалла.*

ТӖПЕЛ

## Сухан яшки

*Кирлӗ пулать: 1 кг пуҫлӑ сухан, 1 л аш шӳрпи, 4 апат кашӑкӗ услам ҫу, авӑртнӑ хура пӑрӑҫ, тӑвар, 4-5 батон касӑкӗ, 70 г хытӑ сыр.*

Батон касӑкӗсене типӗ ҫатмара ӑшаламалла. Кашнине сыр сӗрсе вӗри духовкӑра 3 минут тытмалла. Сухана ҫурма ункӑпа касмалла. Ҫатмара ӑна услам ҫупа саралса хӗреличчен шаритлемелле. Аш шӳрпине вӗретмелле, пӑрӑҫ, тӑвар сапмалла. Сӗтел ҫине лартас умӗн турилккене батон касӑкӗсем ямалла.

## Сӑрапа пӗҫернӗ кӑвакал ашӗ

*Кирлӗ пулать: 1 кӑвакал ашӗ, тӑвар, пӑрӑҫ, панулми, ӳсентӑран ҫӑвӗ, сӑра.*

Аша ҫумалла, алшӑллипе типӗтмелле, шал тата тул енчен тӑвар тата пӑрӑҫ сӗрмелле. Кӑвакал тушкине ҫурмаран каснӑ, вӑрринчен тасатнӑ панулми тултармалла. Противене ҫу сӗрмелле, хӗртмелле, аш хумалла, 



сӑра ямалла. Аша саралса хӗреличчен пӗҫермелле. Хушӑран ӑна противеньре пуҫтарӑннӑ сӗткенпе сапмалла.

## Салат

*Кирлӗ пулать: 3 панулми, 100 г хытӑ сыр, 5 аҫтӑрхан мӑйӑрӗ, 1 апат кашӑкӗ майонез, 1 апат кашӑкӗ хӑйма, тӑвар, сахӑр.*

Панулмие хуппинчен, вӑрринчен тасатмалла, улӑм пӗрчи пек ҫӳхен турамалла, сыра – тӑваткал. Аҫтӑрхан мӑйӑрне вӗтетмелле. Пурне те хутӑштармалла, тӑвар, сахӑр, ҫур лимон сӗткенӗ, майонез хушмалла.

ЮРАТНӐ ЮРӐ

**"Чупрӑм тухрӑм кӳлӗ хӗррине" юрра илтсенех мӑшӑрӑма, Аркадий Айдака, аса илетӗп. Вӑл ӑна питӗ килӗштеретчӗ. Юрӑ сӑмахӗсене хаҫатра пичетлесе кӑлараймӑр-ши?**

**Людмила АЙДАК.**

**Етӗрне районӗ, Тури Ачак ялӗ.**

## Чупрӑм тухрӑм кӳлӗ хӗррине

*Сӑвви В. Давыдов-Анатрин*

*Кӗвви А. Асламасӑн*

1. Чупрӑм тухрӑм кӳлӗ хӗррине,
Ҫамрӑк сӑнӑм ӳкрӗ шыв ҫине.
Ҫулӑм хыпрӗ манӑн ҫамрӑк чӗрене,
Эп ҫухатрӑм, ай, ҫухатрӑм
чунӑм савнине.
2. Садра вӑштӑр-вӑштӑр ҫилӗ вӗрнипе
Шурӑ ҫӗмӗрт лӑпкӑн хумханать.
Тусӑм, кунӗн-ҫӗрӗн саншӑн ҫуннипе
Канӑҫ пӗтрӗ, канӑҫ пӗтрӗ,
чунӑм хурланать.
3. Сарӑ ҫутӑ ҫӳллӗ тӳпере,
Куртӑм: кӗчӗ пӗлӗт хушшине.
Хамӑн савнӑ тусӑм чунӑм-чӗрере,
Вӑл туять-ши, ах, туять-ши эпӗ ҫуннине?

## Асанне арчинчен

**ҪӖРУЛМИ ИКЕРЧИ.** Теркӑпа хырнӑ ҫӗрулми тӗксӗмленесрен сӗткенне сӑрхӑнтармалла. Шултра сухана теркӑпа вӗтетмелле, ҫӗрулмине хушмалла.

**ТУТЛӐ ПЛОВ.** Вӑл кӗрпеклӗ пултӑр тесен риса пӗҫерес умӗн ҫумалла, типӗтмелле. Тарӑн ҫатмана тултарса вӗри шыв ямалла.

**ПӖВЕР.** Пӗҫернӗ пӗвер типӗ пулать. Ӑшалас умӗн ӑна вӗрекен шыва ямалла. Кун пек тусан сӗткенӗ пӗҫернӗ чухне юхса тухмасть.

**ҪӐРА СОУС.** Шӗвӗ соуса ҫӑралатма 1/2 стакан сӗте 1 апат кашӑкӗ крахмал хушмалла.

**ЫХРА.** Пир хутаҫа ыхрана сухан хуппипе хутӑштарса тултармалла, холодильника упрама хумалла. Кун пек тусан ыхра шӑтмасть.

**СӖТКЕН.** Апельсин, лимон сӗткенӗсене ытларах сӑрхӑнтарма 



малтан вӗсене 2 минут вӗри шывра тытмалла.

**ТИМӖР МУНЧАЛА.** Хачча ҫивӗчлетме тимӗр мунчала касмалла.

ЙӐЛА-ЙӖРКЕ

## Ҫураҫури кӗлӗсем

Алӑка е чӳречене пӗр шит уҫаҫҫӗ, пурте тухӑҫалла пӑхса кӗлӗ тӑваҫҫӗ:

– Эй, тӑвансем, тӑрӑр халӗ ура ҫине, Турра кӗлӗ тӑвар! Эй, пӗсмӗлле, аминь. Ҫӳлти Турӑ, ҫӗрте патша, Сире кӗлӗ тӑватпӑр, лайӑх чӗлхе-ҫӑварӑмпа, таса чунӑмпа, ырӑ кӑмӑлӑмпа; ырлӑхсывлӑх патӑр, лайӑх ҫынпа паллашма патӑр, ватӑсене курсан пичче темелле пултӑр, ҫамрӑксене курсан шӑллӑм темелле пултӑр, карчӑка курсан асанне темелле пултӑр, ҫамрӑк хӗрсене курсан йӑмӑк темелле пултӑр, ача-пӑчаллӑ пулччӑр, ватӑлса шурӑ ҫӳҫлӗ пуличчен пурӑнмалла пултӑр!

Вара хӗр амӑшӗ кучченеҫе тата-тата кашни кӗтесе хурать: Хӗрт-сурта, кил илемне кӳрсе тӑракан Турра валли. Хӑнасем лараҫҫӗ те ӗҫме-ҫиме тытӑнаҫҫӗ. Хӗр пӳрте кӗрсен ашшӗне амӑшне пуҫҫапать. Лешсем вӑл вӑхӑтра куркапа сӑра тытса тӑраҫҫӗ, вӗсем сӑрине ӗҫсе тав тӑваҫҫӗ: "Тав сана, хӗрӗм", – теҫҫӗ. Ашшӗамӑшӗ ӑна пехиллет:

– Эй, ачам, пиртен тухнӑ йӑла мар, ваттисенчен тухнӑ йӑла; санӑн пурнӑҫу ырлӑхлӑ-сывлӑхлӑ, вӑрӑм ӗмӗрлӗ, ачаллӑ-пӑчаллӑ пултӑр. Ҫӑкӑрлӑ-тӑварлӑ пул, ырӑ курса пурӑнма тӑрӑш. Эй, ваттисем, пил тӑвӑр! Эпир ӗҫетпӗр, ҫиетпӗр, сирӗн ятӑрсене асӑнатпӑр, кӑмӑлӑра хӑвармастпӑр, шухӑшӑрсенчен шуйланса хӑраса тӑмастпӑр, ҫырлахса пил тӑвӑр.

Хӗрпе кӗрӗве, Турӑ, ан пӑс. Хӗрпе кӗрӗве ҫын халапӗ хыҫҫӑн, Турӑ, ан яр. Ан вӑрҫтар, ан ятлаҫтар, Турӑ, вӗсене. Пӗр кавар, пӗр шутлӑ пурӑнма, Турӑ, пулӑш.

ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

## Апатлантармалла

Чылай чечек хӗлле ҫеҫке ҫурать (азалия, калла, орхидея, сенполия, цикламен, гиппеаструм тата ытти те). Вӗсене уҫӑ пӳлӗмре тытмалла, сывлӑш температури 16-18 градусран ытлашши пулмалла мар, унсӑрӑн ҫулҫи те, чечекӗ те тӑкӑнать. Вӗсене ятарлӑ удобренипе апатлантармалла. Ӑна хатӗрлеме те пулать: 2 г аммиак селитри, 2,5 г суперфосфат тата 0,5 г кали тӑварӗ илмелле, хутӑштармалла, 5 л шывра ирӗлтермелле, шӑвармалла.

## Кӑпкалатмалла

Хӗлле пӳлӗмри чечексене тӑтӑшах шыв сапмалла, пӗрӗхмелле. Унсӑрӑн вӗсем аптраҫҫӗ, кӑмпа чирӗ те аталанать. Чечексем хӑйсен илемӗпе чылай савӑнтарччӑр тесен куршакри тӑпрана час-часах кӑпкалатмалла: уйӑхра пӗр хутчен кая мар.

КИРЛӖ ПУЛӖ



## Килти «тухтӑр»

Килте кушак усракансем тухтӑрсенчен 5 хут сахалрах пулӑшу ыйтаҫҫӗ. Вӗсем миокард инфарктӗпе ытлашши чирлемеҫҫӗ. Кӗске ҫӑмлӑ е ҫӑмсӑр кушаксем ҫынна ытти ӑратран лайӑхрах сыватаҫҫӗ. Хырӑмлӑх, ӑшӑк, ар органӗсене уйрӑмах аван сиплеҫҫӗ. Вӗсем ывӑннине, стреса, пуҫ ыратнине сиреҫҫӗ, юн пусӑмне лайӑхлатаҫҫӗ, савнӑ май чӗре таппи те йӗркеленет. Хура кушак ыттисемпе танлаштарсан усал вӑя икӗ хут ытларах туртса илет. Сарӑ-хӗрлӗ тӗслисем хевтеллӗ, сӑрӑ-кӑвакли чун-чӗрене лӑплантарать, шупка сарри вӑйхӑват хушать. Сиплес енӗпе шуррине ҫитекенни ҫук-тӑр.

**Перс кушакӗ остеохондрозран, сыпӑсем ыратнинчен сиплет.**

СӖНӲ-КАНАШ

## Чей хутаҫӗ

**Чей хутаҫне усӑ курнӑ хыҫҫӑн ҫӳп-ҫапа ывӑтатпӑр. Анчах вӑл килтӗршре те юрӑхлӑ.**

■ Чей хутаҫне сивӗ шывра йӗпетмелле, ӳт ҫинчи чӗрмеленӗ, кӑвакарнӑ, хӗрелнӗ вырӑна хурса 15 минут тытмалла.

■ Пигмент пӑнчине, герпеса, куҫ айӗ хуралнине пӗтерме чей хутаҫӗнчен сивӗ компресс хатӗрлемелле.

■ Вӑйлӑ вараланнӑ чашӑк-тирӗке хими хатӗрӗсӗрех тасатма пулать. Пысӑк савӑта шыв тата чей хутаҫӗ ямалла, унта чашӑк-тирӗк тултармалла. Вӑл ҫӑмӑллӑнах тасалӗ.

■ Шӑши, эрешмен, хурт-кӑпшанкӑ асӑрханӑ вырӑна чей хутаҫӗ хумалла. Вӗсем унӑн шӑршине килӗштермеҫҫӗ, ҫав вырӑнтан пӑрахса каяҫҫӗ.

■ Усӑ курнӑ чей хутаҫне холодильника хурсан яланах ырӑ шӑршӑ кӗрӗ.

ТӖЛӖКСЕМ

Турӑш – лайӑх пурнӑҫа.
Турпас – чухӑнлӑха.
Турта хуҫӑлни – ача вилессе.
Тутӑр ҫыхни – пуҫ ыратасса.
Хура тутӑр – хуйха.
Тыр акни – лайӑха.
Тырӑ вырни – пуясса.
Тырӑ миххисем – кун-ҫула.
Ҫӗнӗ уйӑх – пурнӑҫ ҫӗнелессе.
Кӗмӗл укҫа – ҫанталӑк сивӗтессе.
Пӑхӑр укҫа – ҫанталӑк ӑшӑтасса.

ПАЛЛАШУ КӖТЕСӖ



**Эпӗ – Анатолий, 55 ҫулта. Ялта пурӑнатӑп. Ҫурт, хуралтӑсем кирпӗчрен. Газ пур, шыв кӗрет, тухать. Ялта пурӑнма кӑмӑллакан хӗрарӑмпа паллашасшӑн. Ҫак номерпе шӑнкӑравлама пултаратӑр: 8-987-126-09-37.**

УЙӐХ КАЛЕНДАРӖ

| Число, кун | | Нарӑс, 2 – кӗҫнерникун | Нарӑс, 3 – эрнекун | Нарӑс, 4 – шӑматкун | Нарӑс, 5 – вырсарникун | Нарӑс, 6 – тунтикун | Нарӑс, 7 – ытларикун | Нарӑс, 8 – юнкун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХӖВЕЛ | тухать | 7.44 | 7.42 | 7.40 | 7.38 | 7.36 | 7.34 | 7.32 |
| | анать | 16.25 | 16.28 | 16.30 | 16.32 | 16.34 | 16.36 | 16.39 |
| Кун тӑршшӗ | | 8.41 | 8.46 | 8.50 | 8.54 | 8.58 | 9.02 | 9.07 |
| УЙӐХ | тӑхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунӗ | 7-мӗш кун | 8-мӗш кун | 9-мӗш кун | 10-мӗш кун | 11-мӗш кун | 12-мӗш кун | 13-мӗш кун |
| | (12 сехет тӗлне) | Сурӑх паллинче | Вӑкӑр паллинче | Вӑкӑр паллинче | Йӗкӗреш паллинче | Йӗкӗреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче |

В. И. ЧАПАЕВ ÇУРАЛНӐРАНПА – 130 ÇУЛ

# Паттӑрлӑхӗ вилӗмсӗр

Д.А.Фурманов писатель, граждан вӑрçин комиссарӗ "Чапаев" романа çырман тата пӗртӑван Васильевсем çавӑн ятлӑ фильм ӳкермен пулсан пирӗн ентешӗн иксӗлми паттӑрлӑхӗ çинчен нумайӑшӗ пӗлместчӗ пулӗ. Николай Стуриков писатель çирӗплетнӗ тӑрӑх – асӑннӑ фильма Шупашкарта кӑтартсан шурсухалсем Борис Бабочкин артист сӑнарӗнче тӳрех "Васятка Чапаева" паллаÑа илнӗ. Каярахпа хӑш-пӗр чӑваш çыравçисем чаплӑ ентеше кӗнекесенче хайсем пӗлнӗ пек сӑнарлама пуçларӗç. Ача чухне Будайка урамӗнче çара уран чупнӑ, каярахпа Атӑл тӑрӑхӗнче шурӑ гвардеецсен сехрине хӑпартнӑ паттӑр начдив çинчен истори наукисен кандидачӗ А.В.Изоркинсӑр пуçне тӗплӗн çыракан пулман тесен те юрать. Арсений Васильевич кӗнеке хатӗрленӗ чухне архиври документсемпе усӑ курнӑ, тӑванӗсемпе, дивизи ветеранӗсемпе калаçнӑ. Сӑмах май, хамӑн диплом ӗçӗн ертӳçи парнеленӗ çав кӗнекене упратӑп-ха.

Эпӗ, Шупашкар районӗнчи Хачӑк ялӗнче тантӑшсемпе йывӑç хӗçсемпе "чапайла" вылянӑскер, "Чапаев" фильма 5-мӗш класра чухне Ишлейри культура çуртӗнче пӗрремӗш хут куртӑм. Каярахпа, вуннӑмӗш класра туссемпе Мускава экскурсие кайсан, Хӗç-пӑшаллӑ вӑйсен тӗп музейӗнче Чапаев тӑхӑннӑ буркӑна, вӑл çӳренӗ тачанкӑна, шуррисене туранӑ хӗçне куртӑм.

Тӑван çӗршывӑн Аслӑ вӑрçи çулӗсенче стрелоксен 25-мӗш дивизийӗ Одессӑна, Севастополе хӳтӗленӗ. 77 чапаевец Совет Союзӗн Геройӗн ятне тивӗçнӗ, вӗсен йышӗнче чӑвашсем те пур. Шупашкарта Чапаев скверӗнче начдив палӑкӗ мӑнаçлӑн курӑнса ларать. Ӑна халалланӑ пысӑках мар палӑк И. Франко урамӗнчи паркра та пур. В.И. Чапаев ячӗллӗ производство пӗрлешӗвӗ халӑха кирлӗ продукци кӑларать. Республикӑри 13 хуçалӑх ун ячӗпе хисепленсе тӑрать. Сӑмах май, ывӑлӗ, артиллери генерал-майорӗ Александр Васильевич Чапаев, ашшӗ çуралнӑранпа 90 çул тултарнине уявлама килсен Муркаш районӗнчи Чапаев ячӗллӗ колхоза çитсе курчӗ. Ун чухне Пичет çуртӗнче журналистсемпе тӗл пулчӗ. Ыйтусене хуравлама пуçласан ӑна "Комсомольская жизнь" журналӑн 1968 çулхи утӑ уйӑхӗнче пичетленнӗ номерне кӑтартрӑм. Хуплашки çине артиллери çарӗсен капитанӗн тумне тӑхӑннӑ А.В.Чапаев сӑнне пичетленӗччӗ. "Курман-çке эпӗ кӑна", – терӗ вӑл тӗлӗнсе автограф çырса панӑ май. Начдив ывӑлӗ Воронежа хӳтӗлеме хутшӑнни, паттӑрлӑхшӑн ӑна Хӗрлӗ Ялав орденӗпе чыслани çинчен каласа панӑччӗ. Сӑмах май, вӑл çапӑçнӑ вырӑнсенче юлашки çулсенче мана та пулма тӳр килчӗ.

1967-1969 çулсенче эпӗ Саратов облаçӗнче çар тивӗçне пурнӑçланӑ чухне политзаняти вӑхӑтӗнче çакнашкал калаçу, тавлашу тесен те юрать, пулса иртрӗ. Политзаняти ирттерекен Корчагин старшина манран Чӑваш çӗршывӗ мӗнпе, кампа палӑрса тӑнине ыйтрӗ. Эпӗ А.Г. Николаев космонавта, В.И.Чапаева, Шупашкар ГЭСне, промышленноç тракторӗсен заводне тума пуçлани çинчен асӑнтӑм. "Йӑнӑшатӑн: Чапаев Балаковӑра çуралнӑ!" – килӗшесшӗн пулмарӗ çакскер. Кун пирки ун чухне наукӑпа тӗпчев институтӗнче ӗçленӗ А.В.Изоркина çырса пӗлтертӗм. Вӑл пулӑшнипе Василий Чапаев вуннӑра чухне ашшӗ-амӑшӗпе пӗрле Балаковӑна куçса кайнине аран ӗнентертӗм. Кун пирки тавлашӑва текех пуçармасан та юрать пулӗ тетӗп, мӗншӗн тесен Василий Иванович Чапаев – пӗтӗм халӑх паттӑрӗ. Ахальтен мар Д.А.Фурманов ун пирки çапла çырса хӑварнӑ: "Унӑн ячӗ граждан вӑрçин историне çутӑ çӑлтӑр евӗр кӗрсе юлать – тивӗçлипех те: унашкаллисем нумаях пулман".

**Александр МОКИН.**
**Шупашкар хули.**



ХИСЕП



**Арсентий Николаевич Иванова Патӑрьел районӗнчи Аслӑ Арапуçӗнче лайӑх пӗлеççӗ. Вӑл вырӑнти хуçалӑхра уй-хир бригадирӗнче вӑй хурать, "Професси тӗлӗшпе чи лайӑххи" диплома тивӗçнӗ. Унра вӑй-хал тапса тӑрать, вӑл пысӑк чун-чӗреллӗ çын.**

# Çӗр хуçи

Ӗçпе хытнӑ, шӑнӑрлӑ алӑ, çирӗп кӗлетке, çилпе кушӑхнӑ сӑн-сӑпат унӑн профессине тӳрремӗнех сӑнарлаççӗ. Калас сӑмаха татӑклӑ, уççӑн пӗлтерет вӑл. Çавӑнпа кӑмӑллать ӑна ял халӑхӗ. Хӑйӗн ӗçне тивӗçлипе пурнӑçлать. Шӑпах çакнашкал çын кирлӗ хуçалӑхра.

Çамрӑклӑх хӑвӑрт вӗçсе иртнишӗн пӑшӑрханать Арсентий Николаевич. Ара, тин çеç ӑна шкултан хӗвел куллиллӗ амӑшӗ кӗтсе илетчӗ, пирвайхи юратӑва пула чӗри хӗмленсе тапатчӗ… Халӗ вара хӗрӗсем те çитӗнсе тӑван йӑваран вӗçсе тухса саланнӑ, иккӗшӗ те Шупашкарта пурӑнаççӗ.

Ашшӗ-амӑшне пулӑшас тӗллевпе Арсентий пӗчӗклех "Рассвет" хуçалӑхра тӑрӑшнӑ. Ӗç кунӗшӗн ун чухне кӗркунне çӑкӑр, утӑ панӑ.

Манӑçми шкул кунӗсем те асрах. Пурнӑç çулӗ çине кӑларнӑшӑн Анфиса Ивановна Денисовӑна паянхи кунччен тав тӑвать арçын. Пӗлӳ çуртне кайиччен маларах лаша витине те çитме ӗлкӗрнӗ каччӑ. Юратнӑ янаварне ачашланӑ, апатлантарнӑ, тислӗк тасатнӑ. Халӗ те пушӑ вӑхӑтра лаша витине васкать вӑл.

Кунта ут спорчӗ çулсерен вӑй илет. Ахальтен мар Арсентий Иванов ертсе пынипе хуçалӑх команди ӑмӑртусенче малти вырӑнсене çӗнсе илет.

Вӑл юрлама та кӑмӑллать, "Шуçӑм" ансамбле çӳрет. Асӑннӑ ушкӑн таврара кӗрлесе çеç тӑрать, юрри-ташшипе çынна савӑнтарать.

Ӑна ял çынни спортсмен пек те пӗлет. Çӑмӑл атлетикӑпа кӑсӑкланаканскер ӑмӑртусенче яланах малти ретре.

Хӗсметре чухне те хастар пулнӑ вӑл. 800 м чупассипе полкра çеç мар, дивизире те палӑрнӑ. Арсентий Николаевич – Сывлӑш çар вӑйӗсен отличникӗ /парашютпа 21 хутчен сикнӗ/.

Унтанпа чылай шыв-шур юхса иртнӗ. Ял çыннин ӗçӗ çеç пӗр евӗрлӗ йӗркеленет: çуркунне вӑрлӑх акса хӑварассишӗн тӑрӑшать вӑл, çулла уй-хире çумкурӑкран тасатать, кӗркунне тырпул пуçтарать. Ӗçпе юнашарах уявсем те иртерет.

Хӑйӗн ӗçне чунран парӑннӑ çынна ял-йыш хисеплет, кӑмӑллать. Ара, Арсентий Николаевич ӗмӗрӗпех çӗр çинче вӑй хурать. Асатте-асаннесен ӗçне малалла тӑсать, чун ӑшшине çӗре парать. Урӑхла каласан, чӑн-чӑн çӗр хуçи вӑл. Шӑпах ун пек хастар çынсем пулнӑран ял пурӑнать паян. Вӗсем ют çӗрте телей шырамаççӗ, ӑна тӑван тӑрӑхрах тупнӑ.

**Николай МИХАЛУКОВ.**

КОНВЕРТРА СӐНЛАННӐ ПУРНӐÇ

# Эрех чыс тумасть, ята çӗртет

Эдик шкулта тӑрӑшсах вӗренмерӗ, "3" паллӑсемпе кӑна ӗлкӗрсе пычӗ. Унӑн ашшӗпе амӑшне ку тӑрӑхра чылайӑшӗ аван пӗлет, предпринимательсем вӗсем. Хӑйсем пысӑк лавкка тытаççӗ, хуçалӑх таварӗсемпе, строительство материалӗсемпе суту-илӳ тӑваççӗ. Çавӑнпа та вӗсен пӗртен-пӗр ывӑлӗ нуша мӗнне пӗлмесӗр çитӗнчӗ. Шкулта вӗреннӗ чухнех Эдик кӗсйинчен 500, 1000 тенкӗлӗх укçасем татӑлмастчӗç. Ташӑ каçӗсенче хӗрсем хӑпма та пӗлместчӗç унран.

Алла аттестат илсен ашшӗпе амӑшӗ хистенипе каччӑ Шупашкарти пӗр аслӑ шкула тӳлевлӗ майпа вӗренме кӗчӗ. Ывӑлӗшӗн килтисем тем тума та хатӗр. Эдик çулталӑк хушши аслӑ шкулта пӗлӳ илнишӗн 100 пин тенкӗ те хывма пултараççӗ. Вӗсем тахçанах кӗтекен диплом кӑна алӑра пултӑр.

Иккӗмӗш курсра пӗлӳ илнӗ чухне Эдика ашшӗ çуралнӑ кун ячӗпе вӗр çӗнӗ "Лада" автомашина парнелерӗ. Кил хуçи пулӑшнипех водитель удостоверенилле пулчӗ. Пуçланчӗ ывӑлӗшӗн ырӑ та савӑк самана. Вӑл занятисене те "тимӗр урхамахӗпе" çӳреме пуçларӗ, тепӗр чухне пачах та каймарӗ. Çуллахи сессире икӗ экзамена аран-аран тытрӗ. Кунта каллех ашшӗн пулӑшӑвӗ кирлӗ пулчӗ.

Ку ӗç кӑçалхи çулла пулса иртрӗ. Эдикпа тус-юлташӗсем çав кас çывӑхри вӑрманта савнӑ хӗрӗн, Ольӑн, çуралнӑ кунне паллӑ турӗç. Çӗрӗпех илемлӗ юрӑ шӑранчӗ. Ирчченех ӗçрӗç, çирӗç, савӑнчӗç çамрӑксем. Киле таврӑнас умӗн çумӑр çуса иртрӗ. Çул самаях йӗпенчӗ. Юлташӗсене ӑсатнӑ хыççӑн Эдик юлашкинчен вырӑнтан тапранчӗ. Самаях эрех ӗçнӗскерӗн килне хӑвӑртрах çитес килчӗ. Çӑмӑл машинӑпа ахаль те вӑйлӑ çӳрекенскер газ педалӗ çине татах та хытӑрах пусрӗ. Умра – çул кукри. Машина çул айккинелле сирпӗнчӗ. Хӗр кӑшкӑрса ячӗ. Вӑл больницӑра кӑна тӑна кӗчӗ. Унӑн пилӗк аяк пӗрчи аманнӑ иккен. Чылай вӑхӑт сиплеме тиврӗ.

Халӗ Оля хӑйне япӑх мар туять. Анчах руль умне ӳсӗр ларнӑшӑн, хӗрӗн сывлӑхне сиенленӗшӗн каччӑн пурпӗрех явап тытма лекӗ. Эрех чыс тумасть çав, ята кӑна çӗртет.

**Георгий БОРЗИН.**
**Красноармейски районӗ.**

# Микул ИШИМБАЙ
# Кĕрĕк
Шӳтлĕ калав

Çĕпритун Ваççи хĕрĕхрен иртнĕ, вăтам пӳллĕ, сайра çырă çӳçлĕ, чалăшрах хура куçлă арçын – пушарникре тăрăшать. Хăй ĕçĕпе кăмăллă вăл. Йывăр йăтса хуçăлмалла мар. Пушар тавраш кашнинче сиксе тухмасть. Ытларах чухне хуть кунĕпе «хуп турттар». Ĕç тумĕ те параççĕ. Ĕç тумĕ тесен, сăмах çăмхине сӳтме çакăнтан пуçламалла пуль.

Арăмне кăна килĕшмест Ваççан ĕçĕ.

– Хăçан тăнлă-пуçлă арçын пек çителĕклĕ шалу илме пуçлăн-ши? Вăл çемье тытма мар, хăв тăранса пурăнмалăх та çитмест! – текех янрашать лешĕ.

Çак сăмахсем Ваççана çĕçĕпе чикнĕнех туйăнаççĕ. Юлашкинчен тӳсеймерĕ арçын, пĕр кунхине ĕçрен тухма заявлени çырса пачĕ. «Обходной лист» текен хут аллине лексен унта мĕн çырнине вуласа тухрĕ те шалт аптрарĕ. Уйăх каярах кăна пушарниксене тивĕçекен тум панăччĕ. Кĕрĕк, çăм атă, ваткăллă шăлавар... Вĕсене пĕрре те тăхăнман-ха Ваçча. Килĕнче упрать. Уйрăмах сăран кĕрĕкĕ хаклă уншăн. Ĕçрен тухнă чух вĕсене тавăрса памалла иккен. Мĕн тумалла? Пайтах пуç ватсан хайхи кĕрĕке хăйне хăварма шутларĕ. Енчен те завхоз шутланакан Элексçее çĕнни выранне кив кĕрĕк тыттарсан? Унашкалли пурха унăн. Виç çул каялла ĕçрен панăскер, кивелнине пула тăхăнма май çукскер, кĕлетĕнче çакăнса тăрать.

Ирпе апатланнă хыççăн Ваçча кĕлете тухрĕ. Кĕрĕкне çулталăк каяллах унта вырнаçтарнăччĕха. Унтанпа алла илмен. Халь ăна йăрхахран илсе çавăркаласа пăхрĕ те çурăмне сив тар тапса тухрĕ. Кĕрĕкĕ йăпăх тăкакан йытă тирне аса илтерет. Кĕве касса пĕтернине пула тĕл-тĕл çапçăра та ула-чăла. Кăшт шухăша кайса тăнă Ваçча тумтирне кĕлет умне илсе тухса лăс-лăс! силлерĕ. Сивĕ сывлăшра пăрăлтатса çăм вĕçрĕ. Çĕрле çунă таса юр çине сарса пăрахса ал айне лекнĕ туяпа çапкаларĕ. Кун хыççăн ăна хӳме çине çакса шăпăрпа юртан тасатрĕ те чĕркесе çыхса кантура васкарĕ. Телейне кура завхоз ĕç выранĕнчех пулчĕ. Ваçча япалисене сĕтел çине хучĕ. «Обходной лист» текеннине Элексçее пачĕ.

– Ăхă, çăм атăпа ватник уйăх каялла хам панисемех. Кĕрĕк ăçта вара? – ун-кун пăхкаларĕ хайхи.

– Акă вăл, Элексей Иванч, – çыххине завхоз умнерех куçарчĕ Ваçча.

Лешĕ ăна салтса хайхи кĕрĕк çине аптраса пăхрĕ те нимĕн ăнланмасăр куçне мăч-мăч тутарчĕ:

– Чим, эп санран кĕрĕк пирки ыйтрăм. Ку вара çĕтĕк сăран ластанки кăна-çке. Эс мĕн, мана çурмаккай выранне хуратăн-им?!

– Хăв епле кĕрĕк патăн – çавнах илсе килтĕм. Ăна эпĕ пĕрре те тăхăнман. Кĕлетре епле çакса хунă – çаплипех çакăнса тăнă, – маххă памарĕ Ваçча.

– Эс кунта пуçа çавăрса ан тăр. Уйăх хушшинче кĕрĕке кĕве çисе яраяс çук. Эп сана алă пустарсах вĕр çĕнĕ кĕрĕк панăччĕ. Кĕлетре çакăнса тăнă тетĕн-и? 40 градус сивĕре епле кĕве пултăр, э?

– Пĕлместĕп, урăх кĕрĕк çук...

– Материаллă таваршăн манăн отчет памалла. Енчен те çак çĕтĕкшĕн хамран укça тытса юлсан? Вопчăм хăть мĕн ту та çĕнĕ кĕрĕк илсе килмесĕр алă пусмастăп.

– Апла пулсан халех пуçлăх патне кĕрсе евитлетĕп. Вăл шива-тва вĕçне-хĕрне тупĕ! – çухалса каймарĕ Ваçча.

– Маншăн пулсан хăть министр патне çит! Çак çĕтĕкне те хăвпа илсе кай! – кутăн çавранса тăчĕ завхоз калаçу вĕçленнине пĕлтерсе.

Пуçлăх выранĕнче пулмарĕ. Хайхи кĕрĕке каллех килне çĕклесе таврăнма тиврĕ.

Тепĕр кун ирпе ĕç кантурне çитсе тӳрех пуçлăх патне кĕчĕ. Тимлĕн итлесе ларчĕ лешĕ. Пурпĕр ним ăнланаймарĕ.

– Манăн мĕн ĕç çак кĕрĕк пăтăрмахĕнче? Пыр, завхозпа ăнлантарса ĕнентер, – терĕ кăна алăк енне пуç сĕлтсе.

Текех завхоз патне кĕмерĕ Ваçча. Шухăшларĕ-шухăшларĕ те прокуратурăна çитме картса хучĕ. Тепĕр кун чăнах та унта çитрĕ, анчах кунта та ун ĕçне татса параймарĕç. Юрист патне консультаци кайма çул кăтартса ячĕç. Ун-кун çӳресе пайтах тарăхса çитнĕ Ваççан ĕçе вĕçне çитерес кăмăлĕ çавах сĕврĕлмерĕ-ха. Кĕçех хайхи кантура çитрĕ. Кунта та кĕрĕк вĕçне-хĕрне тупса пулмарĕ, министерствăран пулăшу ыйтма сĕннипех çырлахтарчĕç. Унта çăхав янăрanпа эрне иртсен виçĕ çынран тăракан комисси персе çитрĕ. Кантура Ваççана чĕнсе илчĕç. Асли кĕрĕке ун-кун çавăркаласа пăхрĕ те:

– Уйăх каярах илнĕ кĕрĕкĕр ăçта? Ку çĕнни мар. Çак пăтăрмахшăн министерствăна çырмалла та пулман, – тесе хучĕ. Унтан завхоз енне çавăрăнса: – Кĕрĕкĕшĕн хăйĕн укçинчен ик хак тытса юлмалла тăвăр та ĕçĕ пĕттĕр, – терĕ.

Кун хыççăн тин хаш! сывласа тăн çавăрса ячĕ Ваçча. «Пурпĕрех хам сăмах çине тăтăм. Алăри тупрана вĕçертме ухмаха ермен. Кĕрĕкшĕн ик хак тытса юлсан та çука тăрса юлмăп-ха», – шухăшларĕ хăйне çĕнтерӳçĕ пек туяканскер килнелле утнă май.

АХ, АНЧАХ...

## Вилĕм çави хĕрхенмест

**Кăрлач уйăхĕн юлашки кунĕсенче республикăра виçĕ çын шăнса вилнĕ, иккĕшĕ сĕрĕмпе наркăмăшланнă.**

Çак тапхăрта Шупашкарти П. Осипов урамĕнчи пĕр гаражра пĕртăвансен, 41-ри арçынпа 50-ри хĕрарăмăн пурнăçĕ синкерлĕ татăлнă. Вĕсен виллисене ашшĕ асăрханă. Кабинăра хускалмасăр лараканскерсене курсан хăрушă инкек сиксе тухнине тӳрех ăнланнă вăл. Сивĕрен çăлăнма пĕртăвансем машинăна сӳнтермен-мĕн. Унран тухса тăракан сĕрĕм хупă гаражра хăвăрт сарăлнă.

Кăрлач уйăхĕн 28-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи пĕр ялта Çĕнĕ Шупашкарта пурăннă 56 çулти арçын шăнса вилнĕ. Вăл тăванĕ патне таксипе килнĕ. Машинăран ансан нумай та утмалла мар иккен. Анчах çурт патне çитесси 40 метр юлсан юр çине ӳкнĕ, тек тăрайман.

Пĕр кун маларах вара Йĕпреç районĕнче тăван килĕнчен 400 метрта, уйра, 48 çулти хĕрарăм шăнса хытнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх – вăл касхине фермăран таврăннă. Ахăртнех, çил-тăманлă çанталăкра уй-хирте аташса кайнă.

Кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕнче, шартлама сивĕре, Вăрнар районĕнче хăй килĕнчен инçех мар 62 çулти хĕрарăм пурнăçран уйрăлнă.

2016 çулхи раштав уйăхĕн çурринчен пуçласа 2017 çулхи нарăс уйăхĕччен республикăра сивĕре 31 çын шăнса вилнĕ.

## Ӳсĕр наркоман

**Кăрлач уйăхĕн 27-29-мĕшĕсенче республикăра "Ӳсĕр водитель" рейд иртнĕ. Çак тапхăрта Çĕнĕ Шупашкарта çул-йĕр хуралçисем "ВАЗ-2112" машинăна чарнă.** Руль умĕнче ларакан 39-ти водитель ӳсĕр пулни тӳрех палăрнă. Тĕрĕслевре полицейскисем машинăра наркотик тултарнă 45 чĕркем тупнă. Каярахпа унăн хуçине те палăртнă. Хăрушă тавар Мари Республикинче пурăнакан 20 çулти каччăн-мĕн.

Малтанлăха палăртнă тăрăх – ăна 20 çул ирĕкрен хăтарма пултараççĕ. Рейд вăхăтĕнче Чăваш Енре 45 ӳсĕр водителе тытса чарнă.

## Вăрман тăрри тикĕс-и?

**"Пĕр-икĕ йывăç каснăшăнах вăрман чухăна юлмĕ", – тенĕ пулас Вăрнар районĕнчи пĕр арçын. Хайхискер пăчкине лав çине хунă та вăрмана вĕçтернĕ, виçĕ йывăçа касса ӳкернĕ. Çут çанталăк сăтăрçи патшалăха 17 пин тенкĕлĕх тăкак кăтартнă.**

Уй – куçлă, вăрман хăлхаллă тенĕ. Хура ĕçе никама пĕлтермесĕр, вăрттăн тунă пулин те çакланнă вăл. Йывăç турттарса таврăнаканскере çул-йĕр хуралçисем тытса чарнă, документ ыйтнă. Çут çанталăк сăтăрçине Вăрнар район сучĕ 7 пин тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăннă.

**Л. АЛА.**

ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 2.02 | 3.02 | 4.02 | 5.02 | 6.02 | 7.02 | 8.02 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2-4 сехетре | -15 | -24 | -23 | -22 | -23 | -21 | -20 |
| | 14-16 сехетре | -10 | -15 | -17 | -18 | -16 | -19 | -17 |
| Юр çăвать | | | | | | | | |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 756 | 762 | 760 | 762 | 762 | 763 | 764 |


# РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

### С У Т А Т Ă П / П Р О Д А Ю

**2. АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ**, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Песок, ОПГС, щебень, кирпич, **КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Высокое качество. Доставка манипулятором. Без выходных. Т. 8-967-470-46-77.

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**11. Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**14. Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**16. Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** торф, уголь – недорого. Т. 89053465671.

**21. Керамблок, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 89176757528.

**22. БЛОКИ керамзитобетонные** заводские, пропаренные; **КИРПИЧ цветной** – любой. Доставка манипулятором. Тел.: 8-903-322-02-08, 8(8352) 48-02-08.

**61. СРУБЫ, строительство** домов, бань "под ключ". Т. 89276670355.

**62. Блоки КБ** от 30 руб., **цемент,** доски обрезные от 5500 руб., песок, ОПГС, **кирпич.** Доставка. Услуги манипулятора. Т.: 8-903-345-53-24, 89033222532.

**64. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**98. Бетон,** раствор, фунд. **блоки, плиты** перекрытия, перемычки, **крышки** для погреба, доски. Д-ка. Дешево. Т. 89278535732.

**610. Отруби** – 7 р., **пшеницу** – 10 р., **ячмень** – 9 р. Т. 89373916016.

### ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 9.00 до 19 ч., сб., воскр. с 9.00 до 13 ч. А: г. Чебоксары. **Т. 8(8352)55-27-33.** *Лиц. ЛО 21-01-001341 от 17.11.2015г. МЗ ЧР. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**38. Чистка колодцев, скважин.** Водоснабжение. Т. 89674715070.

**77. НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152. БУРЕНИЕ скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**189. Бурение колодцев, скважин.** Т.: 89674703824, 89279905481.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на **3, 6, 7** этажах
Дома печати.
Справки по тел.: 28-83-70, 56-04-17, 28-83-64.

### ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**39. Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**50. Коров, телок.** Т. 8-927-850-85-64.

**817. Коров, бычков, телок, лошадей.** Т. 8-961-348-91-88.

**818. Бычков, телок, коров, лошадей.** Т. 8-967-796-71-42.



**«ХРЕСЧЕН САССИ»**
**Обществăпа политика хаçачĕ**
**Индекс 54838**
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН – Д. А. МОИСЕЕВ

Редактор – В.В. ПЕТРОВА
РЕДКОЛЛЕГИ:
В.В. Петрова – редактор
И.П. Никитина – корреспондент
Л.А. Никитина – корреспондент
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ

hypar3@mail.ru

Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
пайсем – 62-04-54, 62-50-06,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 316
Тираж 6648

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.

